Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

84-85 (7509-7510) №№ ✻ Шӑмат кун, 2007 ҫулхи октябрӗн (юпа) 13-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Октябрӗн 14-мӗшӗнче – Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсен тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗ

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЯЛ ХУҪАЛӐХӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ, АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСӖНЧЕ ӖҪЛЕКЕНСЕМ!**

Сире професси уявӗпе – Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсен тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗ ячӗпе чӗререн саламлатӑп.

Эсир хӑвӑр пурнӑҫлакан ӗҫшӗн ответлӑха ҫирӗп туйса тӑратӑр. Эсир тӑрӑшнипе паян аграри секторӗнче палӑрӑмлӑ улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ.

Республикӑра ял хуҫалӑхӗ тӗллевлӗ аталанать – выльӑх-чӗрлӗх йышӗ ӳсет, ҫӗнӗ предприятисем йӗркеленеҫҫӗ, ял тӑрӑхӗсенче ял хуҫалӑх кооперативӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Отрасльте продукци туса илессипе Чӑваш Ен Раҫҫейре малтисенчен пӗри.

Апат-ҫимӗҫпе продукци тирпейлекен промышленноҫра туса илекен продукцин пахалӑхне тата унӑн ассортиментне ӳстерессипе, ҫӗнӗ технологисене, пӗтӗм тӗнчери пахалӑх шайӗн стандарчӗсене ӗҫе кӗртессипе ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.

Республикӑра «Агропромышленность комплексне аталантарасси» пысӑк пӗлтерӗшлӗ наци проекчӗ активлӑ пурнӑҫа кӗрсе пырать. Раҫҫей Федерацийӗн Ял хуҫалӑх министерстви хакланипе Чӑваш Ен уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсем валли ҫӑмӑллатнӑ кредитсем парассипе малта шутланать, чылай пысӑк регионсем те ҫитеймеҫҫӗ. Тӗрӗссипе наци проектне пурнӑҫлама республикӑри харпӑр хӑйсен хуҫалӑхне тытса пыракан 25 пин уйрӑм хуҫалӑх хутшӑнать. Ҫакӑ вӑл ял хуҫалӑхӗн тӑнӑҫ аталанӑвӗшӗн тата ҫынсен пурнӑҫ условийӗсем йӗркеллӗ пулассишӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Отрасль ӗҫченӗсемпе ветеранӗсене куллен ҫине тӑрса ӗҫленӗшӗн, хавхаланушӑн, хӑвӑрӑн тивӗҫе туйнишӗн тата тӑван ҫӗре чунтан юратнишӗн тав сӑмахӗ калатӑп.

Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, ӗҫре ӑнӑҫусем, телей тата тӑнӑҫлӑх сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчӗ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛӖ ЯЛ ӖҪЧЕНӖСЕМ!**

Сире пурне те Ял хуҫалӑхпе продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен професси кунӗпе ӑшшӑн саламлатӑп.

Ҫӗр – пирӗн пуянлӑх, пире тӑрантараканӗ. Вӑл хӑйне юрататакансене яланах пысӑк тухӑҫпа савӑнтарать. Ҫанталӑк условийӗсене пӑхмасӑр, акса-лартса хӑварнӑ ял хуҫалӑх культурисене пухса кӗртес тесе хӑвӑртан килнине йӑлтах тӑватӑр. Ҫӑмӑлах пулмарӗ пулин те, япӑх мар тыр пул ҫитӗнтерсе илтӗмӗр. Ҫӗр улми анисем те пушанчӗҫ. Унӑн тухӑҫӗ иртнӗ ҫулхинчен кая ан пултӑр тесе хӑвӑртан килнине йӑлтах турӑр. Халӗ вара пахча ҫимӗҫпе тымар ҫимӗҫе те уйран йӗркеллӗ пуҫтарса кӗртес тесе тимлетӗр.

Выльӑх - чӗрлӗх продукцине туса илессипе те район малаллах каять. Кӑҫалхи 9 уйӑхра та аш, сӗт иртнӗ ҫулхи ҫак вӑхӑтринчен ытларах туса илтӗмӗр. Пирӗн паянхи тӗллев – малалла татах та ӳсӗмлӗрех вӑй хурасси. Ку вара йӑлтах сирӗн тӑрӑшулӑхӑртан килет. Тавах сире пархатарлӑ та ырми-канми ӗҫӗршӗн, хӑвӑрӑн тивӗҫӗре чун-чӗре хушнӑ пек пурнӑҫланӑшӑн.

Ыран – Пукрав. Умра – сивӗ хӗл кунӗсем. Ҫакӑ пирӗн яваплӑха татах та ӳстерме ыйтать. Продукци туса илессипе, выльӑх-чӗрлӗхе ӑнӑҫлӑ хӗл каҫарассипе тимлемелле. Ку тӗлӗшпе эсир малашне те хӑвӑртан килнине йӑлтах пурнӑҫласса, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе, ӳсӗмсем тӑвасса шанатӑп.

Пурне те сире ҫирӗп сывлӑх, ӑнӑҫу, вӑрӑм та телейлӗ кун-ҫул сунатӑп, ҫемйӗрсенче килӗшӳпе тату пурнӑҫ хуҫалантӑр, сӗтел ҫи яланах тулӑх пултӑр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю. ИВАНОВ.**

### Чӑваш Республикин Президенчӗн Указӗ

## 2008 ҫулта Республика кунне ирттересси ҫинчен

Чӑваш Республикин “Чӑваш Республикин Патшалӑх уявӗ ҫинчен” саккунӗпе килӗшӳллӗн, Чӑваш Республикин муниципалитет тытӑмӗсен социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвне малалла хавхалантарас тӗллевпе ҫапла йышӑнатӑп:

1. 2008 ҫулта Республика кунне уявлассипе ҫыхӑннӑ тӗп мероприятисене Шупашкар хулинче, ҫавӑн пекех социаллӑ пурнӑҫпа культура, инженери, транспорт инфратытӑмне аталантарас, ялсенчи строительствӑпа хӑтлӑх пахалӑхне ҫӗклес енӗпе пысӑк кӑтартусем тунӑ Йӗпреҫ тата Муркаш районӗсенче ирттерес.

2. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн ҫапла тумалла:

2008 ҫулта Республика кунне хатӗрленмелли тата ирттермелли мероприятисен планне, ҫав шутра чикӗ леш енчи хӑнасене чӗнсе инвестици форумӗ, ҫавӑн пекех пӗтӗм Раҫҫейри черетлӗ фестиваль тата халӑх пултарулӑхӗн конкурсӗсем ирттерессине хатӗрлемелле тата ҫирӗплетмелле;

Чӑваш Республикин муниципалитет районӗсемпе хула округӗсен Республика кунне уявлассипе ҫыхӑннӑ мероприятисене вӗсен территорийӗнче ирттермелли право ҫӗнсе илмелли конкурс условийӗсемпе килӗшӳллӗн Йӗпреҫ тата Муркаш районӗсене ялсен общество инфратытӑмне аталантарма укҫа уйӑрса памалла.

3. Вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсене 2008 ҫулта Республика кунне халалласа йӑлана кӗнӗ “Акатуй” уявсем, культурӑпа спорт мероприятийӗсем йӗркелеме сӗнес.

4. Ҫак Указ ӑна официаллӑ майпа пичетлесе кӑларнӑ кунран вӑя кӗрет.

**Чӑваш Республикин Президенчӗ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

2007, юпа, 10, 88 №.

### Сывлӑх сыхлавӗ

## Амӑшӗсемпе ачисен сывлӑх керменӗ

Республикӑри перинатальнӑй центра амӑшӗсемпе ачалӑха хӳтӗлессипе патшалӑх пулӑшӑвне ӳстерес тӗллевпе 2001 ҫулта туса хунӑ. Юлашки ҫулсенче вӑл чӑннипех те амӑшӗсемпе ачисен сывлӑх керменӗ пулса тӑнӑ. Ҫакна Раҫҫей Президенчӗ Владимир Путин Чӑваш Енре пулнӑ чухне хӑй курса ӗненнӗ.

Чӑваш Республикин сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министрӗ Нина Суслонова ҫӗршыв пуҫлӑхне амӑшӗсемпе ачалӑха сыхлассипе республикӑра туса ирттерекен ӗҫсем пирки каласа панӑ.

Пӗтӗм ӗҫсене комплекслӑ туса пыраҫҫӗ. Ӳсӗмсем те ҫук мар. Вӑхӑт ҫитмесӗрех ача ҫуратасси 15 процент, абортсем тӑвасси чакнӑ, ҫуралнӑ ачасем вилессин шайӗ пӗчӗкрех. Ку кӑтартусем кӑҫалхи 7 уйӑх итогӗсемпе Европа кӑтартӑвӗсемпе шайлашуллӑ.



«Сывлӑх» наци проекчӗпе килӗшӳллӗн 2006-2007 ҫулсенче республикӑна пӗтӗмпе 1 миллиард тенкӗ ытла килнӗ. Травмотологин, ортопедин тата эндопротезированин федераллӑ центрне тунине шутласан вара ку сумма ҫулталӑк вӗҫленнӗ тӗле 4 миллиард тенкӗ ытла пулать.

Пысӑк пӗлтерӗшлӗ наци проектне пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗре 42 муниципаллӑ медицина учрежденийӗ хутшӑнать. 2006-2007 ҫулсенче республикӑна 319,5 миллион тенкӗлӗх 787 диагностика оборудованийӗпе тивӗҫтернӗ.



Профилактика ҫине ытларах тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Иртнӗ ҫул бюджет сферинче ӗҫлекен 16 пин ҫын ытла тата ҫавӑн чухлӗ ҫын сывлӑхшӑн сиенлӗ производствӑра вӑй хуракансем диспансер тӗрӗслевӗнче пулнӑ. Кӑҫал вара бюджет сферинчи 52 пин ҫын тата сывлӑхшӑн сиенлӗ производствӑри 29 пин ҫын диспансеризаци витӗр тухнӑ.

Патшалӑх пуҫлӑхӗ перинатальнӑй центр ертӳҫипе Алла Самойловапа хӑш-пӗр кабинетсене кӗрсе курнӑ. Владимр Путин уйрӑмах пулас амӑшӗсен тата ашшӗсен шкулӗпе интересленсе паллашнӑ.

Ҫие юлнӑ хӗрарӑмсемпе калаҫнӑ хыҫҫӑн патшалӑх пуҫлӑхӗ вӑхӑтсӑр ҫуралнӑ ачасене пӑхса ӳстермелли инкубаторта пулнӑ. Ӑна хальхи ҫӗнӗ оборудованипе тивӗҫтернӗ.

«Эпир хальхи вӑхӑтра наци проектне хутшӑнса туса ирттерекен пӗтӗм ӗҫ вӑл,– палӑртнӑ В. Путин,– ыранхи ӑнӑҫлӑхӑн никӗсне хывакан кирпӗч кӑна». Вӑл ҫавӑн пекех центр тивӗҫтерекен ҫӑмӑллӑхсемпе паллашнӑ, юлашки пилӗк ҫул хушшинче тунӑ ҫитӗнӳсене пысӑк хак панӑ.

**О. ИЛЬИНСКАЯ.**

### Министр интервью парать

## Сӑмах – М.В. Игнатьева

Республика министрӗсем район хаҫачӗн вулаканӗсене хӑйсен ӗҫӗ-хӗлӗ, юлашки вӑхӑтра пирӗн пурнӑҫра пулса иртекен улшӑнусем пирки каласа параҫҫӗ. Паян редакци хӑни – Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ, ял хуҫалӑх министрӗ М.В. ИГНАТЬЕВ. Пирӗн пурнӑҫ условийӗсем мӗнле пуласси ытларах ял хуҫалӑх аталанӑвӗпе ҫыхӑннӑ май шӑпах вӗсем ҫинчен сӑмах хускатрӗ вӑл. Интервью 2-мӗш страницӑра пичетленет.

### Официаллӑ

## Суйлав ирттерме

Райхаҫатӑн паянхи номерӗн 3-4-мӗш страницисенче РФ Патшалӑх Думин тата вырӑнти суйлавсене ирттерес тӗлӗшпе йышӑннӑ документсене пичетлетпӗр. Вӑл шутра – суйлав участокӗсене йӗркелени ҫинчен калакан йышӑну. Районта пӗтӗмпе 51 суйлав участокӗ пулать.

Патшалӑх Думин депутачӗсен суйлавӗпе пӗрлех депутатсен районти Пухӑвне 1 № Октябрь тата 7 № Мӑн Сӗнтӗр округӗсемпе икӗ депутат суйламалла. Ҫавӑн пекех ял тӑрӑхӗсен депутатсен Пухӑвӗсен пилӗк депутатне суйламалла. Ҫак ыйтусемпе йышӑннӑ документсем те паянхи номерте пичетленеҫҫӗ.

### Суйлав умӗн

## «Единая Россия» партие шанакансем ытларах

Октябрӗн 10-мӗшӗнче «Левада-Центр» политика партийӗсен рейтингӗн социологи тӗпчевӗн итогӗсене пӗлтернӗ. «Интерфакс» пӗлтернӗ тӑрӑх, социологсем палӑртнӑ тӑрӑх декабрӗн 2-мӗшӗнче Патшалӑх Думин депутачӗсен суйлавне хутшӑнас кӑмӑллисенчен ытларахӑшӗ хӑйсен сассисене «Единая Россия» партишӗн пама хатӗр.

Октябрӗн 5-10-мӗшӗсенче «Левада-Центр» тӗпчев ирттернӗ. 1600 ҫыннӑн шухӑш-кӑмӑлне ыйтса пӗлнӗ. Респондентсен 68 процентӗ декабрӗн 2-мӗшӗнче хӑйсен сассисене «Единая Россия» партишӗн парасса пӗлтернӗ. «Единая Россия» партин рейтингӗ иртнӗ уйӑхрипе танлаштарсан 13 процент ӳснӗ. Сӑмахран, сентябрь уйӑхӗнче хӑйсен сассисене уншӑн пама хатӗррисем ыйтса пӗлнисенчен 55 процентӗ чухлӗ пулнӑ.

Иккӗмӗш вырӑнта, иртнӗ уйӑхри пекех, Раҫҫей Федерацийӗнчи Коммунистсен партийӗ. Уншӑн сасӑлас текенсем иртнӗ уйӑхра 18 процент пулнӑ пулсан, халӗ 15 процент.

«Левада-Центр» даннӑйӗсемпе ҫак тапхӑртах ЛДПР рейтингӗ 11 процентран 6 процента ҫити, «Справедливая Россия» рейтингӗ 7 процентран 5 процента ҫити чакнӑ. Респондентсен 1-шер процентӗ декабрӗн 2-мӗшӗнче «Яблоко», СПС, «Патриоты России», «Демократическая партия России», «Партия мира и единства», «Партия социальной справедливости» партисемшӗн сасӑласса пӗлтернӗ.

Раҫҫей гражданӗсен 63 процентӗ РФ Президенчӗ Владимир Путин Патшалӑх Думин депутачӗсен суйлавӗнче «Единая Россия» партин суйлавҫисен списокне ертсе пыма килӗшнипе ку парти суйлавҫӑсен сассисене пухасси ӳсет тесе шутлать. Юрий Левада аналитика центрӗн тӗпчевӗсем тӑрӑх вӗсенчен 35 процентӗ ку партишӗн сасӑлас текенсен йышӗ палӑрмаллах ӳсессе шанать.

### Юбилей

## *Саламлатпӑр*



Муркаш районӗнчи Шаптак-Муркаш ялӗнче пурӑнакан **Валентина Александровна АВДЕЕВАНА** юбилей ячӗпе саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телей сунатпӑр. Пур тӑванӗнчен салам.

**Ывӑлӗсем, пӗрле ӗҫленисем, хурӑнташӗсем, юлташӗсем, пускилсем.**





Юратнӑ аттепе аннене, кукаҫие тата кукамая – Муркашра пурӑнакан **Галина Александровнапа Иосиф Николаевич ВАСИЛЬЕВСЕНЕ** 55 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тата ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, иксӗлми телей сунатпӑр. Сирӗн ялан хавас кӑмӑл пултӑр, пит-куҫӑрта ҫепӗҫ кулӑ ҫиҫтӗр. Телейлӗ пулӑр, утас ҫулӑрсем такӑр пулччӑр.

**Саламлаканӗсем: икӗ хӗрӗ, икӗ кӗрӳшӗ, икӗ мӑнукӗ, тӑхлачи, тӑванӗсемпе ҫывӑх ҫыннисем.**